26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ОКТЯБРЬ 5 ЭРНЕКУН 193(6944) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕне Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

ХАМĂР ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂСЕНЕ ЧЫСЛĂН ПУРНĂÇА КĔРТЕР!

Пирĕн республика кăçалхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр государствăпа тырă парса татма пĕтĕм çĕршыв умĕнче сăмах панă. Ку обязательствăна сӳтсе явнă чухне, колхозниксемпе колхозницăсем çав вăхăт тĕлне государствăна тырă парса татма кăна мар, ытти мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене те туса пĕтерме май пуррине шута илнĕ. Пĕлтĕр аслă Октябрь уявĕ тĕлне Чăваш республикинчи колхозсем государствăна тырă пĕтĕмпех парса татнăччĕ, авăн çапса тата ытти паха ĕçсене туса пĕтернĕччĕ. Кăçалхи çул та колхозниксемпе колхозницăсем аслă уява çавăн пек кĕтсе илме ĕмĕтленеççĕ.

Анчах витĕмлĕнех çакна палăртса калас пулать: кăçал пирĕн республика Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса илнĕ хăйĕн обязательствисене çителĕксĕр пурнăçа кĕртсе пырать. Ноябрь çитиччен вăхăт пĕр уйăхран та сахалтарах юлчĕ, анчах государствăна тырă памалли плана республика пурĕ те 65 процент çеç тултарнă. Авăн çапас, çĕрулми кăларас тата кĕрхи çĕртме тăвас паха ĕçсем те вăраххăн пыраççĕ. Çакăн пек вăраххăн ĕçленине пула, пирĕн социализмлă обязательствăсем пурнăça кĕмесĕр юлма пултараççĕ. Çакă вара вăл пирĕн орденлă республикăна, йывăр вăрçă вăхăтĕнче хăйĕн задачисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынăскерне, намăса кăларнă пулĕччĕ. Çĕршыв умĕнче илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртмесĕр хăварас мар тесен, пирĕн халех татăклă мерăсем йышăнас пулать.

Государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парас ĕçре республика кая юлнине пĕтерес шутпа тата хамăр çине илнĕ обязательствăсене вăхăтра пурнăçа кĕртес шутпа, парти Обкомĕн бюровĕ октябрĕн 1-мĕшĕпе ноябрĕн 1-мĕшĕ хушшинче государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăхлăх ирттерме йышăнчĕ. Вырăнти партипе совет органĕсем, колхозсен руководителĕсем çав уйăхлăх вăхăтĕнче государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татас тата авăн çапса пĕтерес ĕçе мĕнпур вăйсемпе майсене мобилизацилеме тивĕçлĕ. Пирĕн çавна тума пур майсем те çителĕклĕ. Тăван çĕршыв умĕнчи пысăк ответлăха туйса ĕçлени тата ялхуçалăх çулĕн ăнăçлăхне татса паракан çав паха ĕçсене большевикла ертсе пыни кăна кирлĕ.

Массăсен ăмăртуне организацилес тĕлĕшпе Вăрнар районĕ паха тĕслĕхсем кăтартать. Кунта çанталăк йĕпе-сапаллă тăни те, машинăсемпе туртăм вăйĕ çитсе пыманни те тырпула вăхăтра вырса пухма, пĕр чарăнмасăр авăн çапма, государствăна тырă пама чăрмантарман. Вăрнар районĕнчи колхозсем государство умĕнчи парăма республикăра пуринчен малтан татрĕç. Вĕсем тырă памалли плана октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма пулнăччĕ, ку обязательствăна вĕсем шăп та шай çав вăхăт тĕлне пурнăçларĕç. Вĕсем хăйсем панă сăмаха мĕнле пурнăça кĕртмеллине кăтартса пачĕç. Вĕсен сăмахĕ пушă сăмах пулмарĕ.

Государствăна тырă памалли плана срокчен тултарма кирли çинчен Октябрьски районра нумай шавларĕç. Кунта та октябрĕн 1-мĕшĕччен государствăна тырă парса татма сăмах панăччĕ. Парти райкомĕн секретарĕ Алексеев тата райисполком председателĕ Херсонов юлташсем пĕр хутчен мар: «Эпир плана çав срок тĕлне тултаратпăр», тесе шантарчĕç.

Чăн та, район сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне республикăра виççĕмĕш вырăн йышăнса тăратчĕ. Район руководителĕсем çав çитĕнӳпе савăнса ӳкрĕç те... лăпланса ларчĕç. Ĕç çавăн пек хăй тĕллĕн пулса пырассине шанса ларнă пирки ĕнтĕ район сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне вунтăваттăмĕш вырăна анса ларчĕ. Вĕсен сăмахĕ ĕçпе сыхăнмарĕ. Алексеевпа Херсонов юлташсем тырă хатĕрлес тĕлĕшпе çавăн пек япăх ĕçленишĕн хăйсен ответлăхне туяççĕ-ши?

Пирĕн республика тырă хатĕрлес ĕçре паян кунччченех кая юлса пырать. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан, вăл кăçал государствăна çак вăхăт тĕлне çĕршер пин пăт тырă парса çитереймен. Тăван çĕршывăн чи паха заданийĕсенчен пĕрине пурнăça кĕртес ĕçре республикăна кам питĕ каялла туртса пырать-ха? Республикăпа пуринчен малтан, Кувакино, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле, Тăвай районĕсем каялла туртаççĕ, вĕсем государствăна тырă памалли плана 50 процентран та каярах тултарнă. Тырпул хатĕрлес ĕçре Улатăр, Шăмăршă, Первомайски, Комсомольски, Канаш тата Елчĕк районĕсенчи нумай колхозсем те япăх ĕçлеççĕ. Кая юлнă районсенчи парти райкомĕсемпе райисполкомсем уйрăм колхоз руководителĕсен тырă хатĕрлес ĕçе хирĕç пыракан шухăш-кăмăлĕсене халиччен те сирсе пăрахман, çав ĕçе пăсакансене тата саботажниксене йĕркене кĕртмен. Государствăна тырă парас ĕçе куллен пур колхозсене те хутшăнтармалла тăвас тесе, асăннă районсенчи парти райкомĕсен секретарĕсемпе райисполком председателĕсем тивĕçлĕ мерăсем йышăнман. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Красная Чувашия» колхоз (председателĕ Мерескин юлташ) сентябрĕн 15-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче государствăна пĕр килограмм та тырă паман. Çав факт çинчен райком сентябрĕн 27-мĕшĕнче кăна сӳтсе-явнă. Йĕпреç районĕнчи 52 колхозран тырă парас ĕçе кунсерен 25—45 колхоз кăна, Первомайски районра 49 колхозран 12—25 колхоз кăна хутшăнать.

Районсен руководителĕсем, пуринчен малтан МТС директорĕсем натуроплата тыррине парас ĕç çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхма тивĕçлĕ. Сĕнтĕр районĕ, сăмахран, государствăна тырă памалли пĕтĕм плана октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 78.7 процент туларнă пулсан, натуроплата планне вара 55 процент кăна тултарнă. МТС директорне Чупраков юлташа çакăн пек япăх ĕç пачах та шухăшлаттармасть пулас. Канаш районĕн тырă памалли пĕтĕм плана çав вăхăт тĕлнех 57,7 процент тултарнă пулсан, натуроплата планне 39 процент кăна тултарнă. МТС ĕçленĕшĕн натуроплата шучĕпе государствăна тырă парас ĕç çавăн пекех Улатăр, Вăрмар, Çĕрпӳ, Шăхасан, Тăвай тата ытти хăшпĕр районсенче те тӳсме çук кая юлса пырать. Çакă вăл ĕç çине пуринчен малтан МТС директорĕсем ответсăррăн пăхнинчен килет. Вĕсен тырă хатĕрлес ĕçе пăсса пынăшăн партипе государство умĕнче ответ тытма вăхăт ĕнтĕ.

Уйăхлăхăн паха задачи—ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерессипулать. Республикăри машинăпа трактор станцийĕсем авăн çапнă çĕрте комбайнсемпе тата молотилкăсемпе япăх усă кураççĕ. 29 МТС-ран пĕр Вăрнар МТС-ĕ кăна авăн çапмалли плана тултарнă. Сиява, Сĕнтĕр, Октябрьски. Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Çĕмĕрле тата Шăхасан МТС-ĕсем тӳсме çук юлса пыраççĕ, вĕсем авăн çапмалли плана 20 процент чухлĕ те тултарайман. Çав МТС-сен директорĕсем молотилкăсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе мерăсем йышăнман, машинăсене техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăрассине организацилемен, çавна пула молотилкăсемпе комбайнсем час-часах чарăна-чарăна лараççĕ. Çав кировсĕр ĕçе халех пĕтермелле. Авăн çапмалли плана республикăри пур МТС-сем те тултарма пултараççĕ, тултармалла та. МТС руководителĕсен трактор бригадисене куллен конкретно пулăшса тăмалла.

Çавăн пекех лашапа ĕçлекен молотилкăсене те талăкĕ-талăкĕпех ĕçлеттермелле, тăпачăпа авăн çапассине анлăрах йĕркелемелле; ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне авăна кирек мĕнле пулсан та çапса пĕтерес пулать.

Республикăри колхозсем кăçалхи çул пысăк тухăçлă çĕрулми лартса çитĕнтерчĕç. Çĕрулми иккĕмĕш çăкăр пулса тăрать. Çав паха çимĕçе вăхăтра та пĕр çухатмасăр пухса кĕртмелле. Анчах çĕрулми кăларас ĕç те кăçалхи çул вăраххăн пырать. Çĕр шăнта пуçларĕ, анчах Улатăр, Йĕпреç, Куславкка Пăрачкав, Çĕмĕрле тата Тăвай районĕсенче çĕрулмин чĕрĕкне те кăларман. Авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕçре ĕçлемен мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене çĕрулми кăларма мобилизацилес пулать. Ку ĕçе кая хăвармалла мар, çĕрулмин пĕр килограмне те шăнса пăсăлма памалла мар. Çĕрулми кăларнипе пĕр вăхăтрах ăна хатĕрлев пункчĕсене турттарма васкас пулать. Пирĕн ноябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр государствăна çĕрулми пĕтĕмĕшпех парса татмалла.

Пирĕн республика октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне кĕрхи çĕртме туса туса пĕтерме сăмах пачĕ. Ку ĕçе пĕр Çĕрпӳ районĕнчи колхозсем кăна çителĕклĕ туса пыраççĕ-ха. Ытти районсенче кĕрхи çĕртмене хăвăртрах туса пĕтермелли майсемпе япăх усă кураççĕ. Кĕрхи çĕртме тумалли вăхăт 10—11 кун кăна юлчĕ. Çав вăхăт хушшинче тырă турттарас ĕçре ĕçлемен мĕнпур туртăм вăйне мобилизацилесен, тракторсемпе май килнĕ таран ытларах усă курсан, нумай районсем кĕрхи çĕртме тумалли государство планне тултарма пултараççĕ.

Уйăхлăх пуçланчĕ. Çак уйăхлăх хамăр республика Тăван çĕршыв умĕнче илнĕ обязательствăсене пурнăça кĕртес ĕçе татса парать. Колхозлă ялăн мĕнпур вăйне, ялхуçалăхне ертсе пырас тĕлĕшпе пухнă мĕнпур пуян опыта хамăр обязательствăсене кăтартуллăн пурнăçлама мобилизацилер!

Колхозлă ялăн мĕнпур вăйне хамăрăн обязательствăсене кăтартуллăн пурнăçлама мобилизацилер!

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем ОКТЯБРĔН 1-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ĔÇЛЕНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (Процентпа)

МТС-сем	Тракторпа ĕçленĕ (авăн çапнисĕр пуçне)	Комбайнсемпе вырнă	Кĕрхи çĕртме тунă	Авăн çапнă
Вăрнар	155,8	104,9	75,5	128,8
Шăхасан	139,2	125,2	89,5	45,5
Куславкка	133,8	122,1	56,0	35,0
Йĕпреç	125,1	143,7	41,0	53,6
Елчĕк	119,9	70,4	20,1	40,0
Ишлей	119,3	37,0	70,0	20,4
Красноармейски	118,9	118,4	65,0	36,3
Çĕрпӳ	118,7	102,0	79,7	51,9
Вăрмар	117,1	92,2	30,4	76,9
Канаш	112,5	58,6	10,6	13,9
Калинино	108,8	81,0	78,5	52,2
Чкаловски	108,1	56,1	18,0	41,0
Комсомольски	103,8	70,5	5,8	32,7
Первомайски	96,2	122,5	8,1	18,1
Шупашкар	95,9	75,0	62,1	33,8
Улатăр	95,7	90,3	27,4	52,3
Тăвай	94,3	40,3	18,8	35,5
Элĕк	93,0	100,3	29,2	57,2
Сĕнтĕр	92,9	79,0	68,0	19,6
Çĕмĕрле	87,5	63,1	2,3	25,7
Сĕнтĕрвăрри	85,4	77,6	54,4	14,5
Етĕрне	82,7	177,0	41,2	35,4
Хĕрлĕ Чутай	81,6	102,3	6,3	10,7
Сурмайдан	78,6	31,3	2,0	28,4
Шăмăршă	74,8	148,8	0,4	10,2
Кувакино	74,6	53,1	8,0	41,8
Октябрьски	73,7	48,0	15,4	7,4
Сиява	64,2	15,5	—	6,9
Пăрачкав	63,6	24,3	11,1	45,4

Планран ирттерсе тырă параççĕ

ШĂХАСАН. Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çак кунсенче пухура планран ирттерсе 915 пăт тырă пама пулчĕç тата районри ытти колхозсене те планран ирттерсе тырă пама чĕнсе çыру çырчĕç. Çак чĕнсе калалнине сӳтсе-явнă хыççăн «Трактор» колхоз 400 пăт, «Новая жизнь» колхоз 500 пăт, «Красный партизан» колхоз 500 пăт, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 300 пăт пама йышăннă. Асăннă колхозсем Заготзерно пунктне планран ирттерсе тырă леçме тытăнчĕç. «Красный партизан» колхоз 125 пăт, «Трактор» колхоз 100 пăт, «Новая жизнь» колхоз 75 пăт леçсе те панă.

В. ВАРБУСЬ.

Уйăхлăха хутшăнса

ЧКАЛОВСКОЕ, октябрĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Государствăна тĕштырă, çĕрулми тата пахчаçимĕç пĕтĕмпех парса татмалли, авăн çапса пĕтермелли уйăхлăха хутшăнса, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз государствăна тырă, çĕрулми парса татрĕ. Пахчаçимĕç памалли плана та ыран тултаратпăр. Çак кунсенчех авăн çапса пĕтеретпĕр.

Çак ĕçсемпе пĕрлех колхоз çĕртме тумалли плана та ăнăçлăн тултарчĕ. Çĕртме тунă çĕрте виçĕ тăван — Селивановсем лайăх ĕçлерĕç. Вĕсем кашни кунхи нормăна ытлашшипех тултарса пычĕç.

Халĕ авăн çапса пĕтерес тата выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе пикенсе ĕçлетпĕр.

В. МАКАРОВ,
Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Районри колхозсем хăйсен обязательствисене мĕнле пурнăçлани çинчен

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Çак кунсенче ВКП(б) райкомĕн пленумĕ районри колхозсем государствăна тырă парас тата ялхуçалăх ĕçĕсене туса пĕтерес тĕлĕшпе илнĕ обязательствăсене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен сӳтсе-яврĕ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Н. Григорьев хăйĕн докладĕнче районра малта пыракан «Жнейка», «Янмурзино», «Пахарь», «Буксир», «Чамыш», Ильич, Чапаев ячĕсемпе тăракан колхозсем государствăна тырă парса татнине палăртрĕ. Çавăн пекех ку колхозсем капан хывас, авăн çапас, кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе те районра малта пыраççĕ. Çав вăхăтрах Сталин тата Киров ячĕсемпе тăракан, «Индустрия», «Унгастрой», «Красный боец», «Исаково», «Красный пахарь», «Правда» колхозсем государствăна тырпул парас тĕлĕшпе пĕтĕм района каялла туртаççĕ. Çав колхозсенчи руководительсем хăйсен айăпне тырă чĕррипе ăнлантарса парасшăн.

Пленум районри чылай колхозсенче кĕлте кӳрес, авăн çапас тата вăрлăхлăх куракĕсене пухса кĕртес ĕçсем çителĕксĕр пулса пынине палăртрĕ. Район сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне капан хывас тĕлĕшпе плана 76 процент çеç тултарнă. Капан хывас тата авăн çапас ĕçсемпе уйрăмăнах Шупуç, Мартынкино, Çавалçырми, Исаково ял Совечĕсене кĕрекен колхозсем кая юлса пыраççĕ.

Пленум çаксемпе пĕрлех МТС ĕçĕнчи çитменлĕхсене те палăртрĕ. МТС-ри 13 молотилкăран нумайĕшĕ ĕçлемесĕр лараççĕ.

Районри колхозсенче çĕрулмипе пахчаçимĕçсем пухса илес ĕçсем те сӳрĕккĕн пулса пыраççĕ. Кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе те чылай колхозсем графика пурнăçлаймаççĕ.

Сӳтсе-явнă ыйту тăрăх пленум татăклă решени йышăнчĕ.

Ив. ХАТАЕВСКИЙ.

Тимофеев ответлăха туймасть

Шупашкар районĕнчи нумай колхозсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçласа, тырпул пухса кĕртмелли ĕçсене ăнăçлăн туса пыраççĕ. Уйрăмăнах халĕ государствăна тырă парасси питĕ те ответлă ĕç пулса тăрать. Соляново, Чăкăр, Çĕньял-Ойкасси, Тулик Хураски, Шăмăш, Лапсар тата ытти ял Совечĕсенчи колхозсем те государствăна тырă памалли графика ирттерсе тултараççĕ, вĕсенчен нумайĕшĕсем государствăна тырă памалли плана тултарчĕç те.

Анчах та Шорчакасси, Хыркасси, Шăнкас, Сарапакасси, Кочаково ял Совечĕсенчи колхозсем государствăна тырă парас тĕлĕшпе чăтма çук юлса пыраççĕ, вĕсем государствăна тырă памалли плана 40—60 процент кăна тултарнă. Çак ял Совечĕсем ĕнтĕ района хăй çине илнĕ обязательствăна пурнăçлама чăрмантарса пыраççĕ. Хыркасси ял Советĕнчи «Стрела» колхозра колхоз председателĕ П. Тимофеев государствăна тырă памалли графика тăтăшах пăсса пырать, государство умĕнчи обязательствăна пурнăçлассишĕн ответлăха туйса ĕçлемест. Кунта тырă леçмеççĕ темелле мар, леçеççĕ, анчах ăна чĕрĕ е таса мар тесе йышăнмаççĕ. Кăçал темиçе лав тырра каялла турттарса килнĕ. Юлашкинчен Тимофеев йышăнман тырра Шупашкарта ятарласа хăй тупнă хваттере хăварма тытăннă. Хальхи вăхăтра Тимофеевăн çав хваттерĕнче 52 михĕ тырă шутланать.

«Стрела» колхоз кăçал ытти ĕçсемпе те юлса пырать. Колхозниксен ĕçлес кăмăлĕ тата хастарлăхĕ пысăк, анчах Тимофеев ответлăха туйса ĕçлеменни питĕ чăрмантарать.

(Хамăр корр.).

Кĕрхи çĕртме планне тултарасси çинчен

ЕТĔРНЕ. Районри малта пыракан колхозсем çитес çулхи вăйлă тырпулăн çирĕп никĕсне хывса хăварассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Мичурин, Буденный ячĕсемпе тăракан колхозсем иртнĕ çул кĕркунне кĕрхи çĕртме сухине планпа пăхнинчен ытларах сухаласа хăварчĕç. Çакă вара ку колхозсене кăçал çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа акса хăварма май пачĕ. Кĕрхи çĕртме тунă участоксенчен вĕсем вăйлă тырпул пухса илчĕç. Иртнĕ çулхи опыт вĕсене халĕ тата лайăхрах ĕçлеме пулăшать. Мичурин ячĕпе тăракан колхоз 67 гектар, Буденный ячĕпе тăракан колхоз 45 гектар кĕрхи çĕртме сухи тунă.

Изамбайри «Смычка» колхозра М. Моисеева колхозница суха патне тул çутăличчен тухать те çурçĕр иртиччченех сухалать Кунашкал тĕслĕхсем районри колхозсенче чылай. «Пионер», «Çĕнĕ чул» колхозсенче те кĕрхи çĕртме сухине тăвас ĕç лайăх пырать.

Çаксемпе пĕрлех районра кĕрхи çĕртме сухине тума тытăнман, ку ĕçе кирлĕ пек туса пыман колхозсем те сахал мар-ха. «Комсомол» колхоз кĕрхи çĕртме сухине тума тытăнман. Ку колхозра пĕтĕмпе те пĕр бригада, ĕç вăйĕ те, туртăм вăйĕ те çителĕклĕ, колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ те пысăк, анчах çак ĕçе колхоз председателĕ Степанов хăй чăрмантарса пырать. «Комбайн», «Чуваш ЦИК», Суворов ячĕпе тăракан колхозсем те кĕрхи çĕртме сухине тăвас тĕлĕшпе сӳрĕккĕн ĕçлеççĕ. Вĕсем çĕртме тума тытăнманпа пĕрех.

«Хĕрлĕ Çăлтăр» колхозри колхозниксем суха патне мар, майăра ытларах сӳреççĕ. Колхоз председателĕ Гаврилов та, ял Совечĕ те, пуçламĕш парторганизаци те колхозри ĕçпе сахал интересленеççĕ.

Районри çĕрĕç пайĕ çинчен те çакнах каламалла ĕнтĕ. Районта малта пыракан колхозсем. кĕрхи çĕртме тăвассине лайăх организациленĕ колхоз руководителĕсем нумай Анчах вĕсен паха опычĕсемпе райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем усă курмасçĕ. юлса пыракан колхозсене мала тухма пулăшмаççĕ.

Ник. ЦВЕТКОВ.

ВКП(б) Обкомĕнче

ФИНАНС ПЛАННЕ ТУЛТАРАС ТĔЛĔШПЕ ОКТЯБРЬ УЯВĔ УМĔНХИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ ÇИНЧЕН

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ Сĕнтĕрвăррипе Çĕрпӳ районĕсенчи финанс работникĕсем финанс планне тултарас тĕлĕшпе Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту пуçласси çинчен йышăннă условисене пăхса тухса, вĕсен пуçарăвне ырланă тата Чăваш АССР-ри мĕнпур финанс работникĕсене Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнма, çапла вара 1945 çулхи IV-мĕш кварталти финанс планне вăхăтчен тултарассишĕн социализмлă ăмăрту пуçласа яма сĕннĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ ВКП(б) райкомĕсемпе хула комитечĕсене финанс работникĕсене 1945 çулхи IV-мĕш квартал финанс планне тултарас ĕçре куллен пулăшса пыма, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту условийĕсене пĕр сăмахсăрах пурнăça кĕртсе пымалла тума хушнă.

Çĕрпӳпе Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи финанспа перекет кассисен работникĕсем тата Госстрах работникĕсем Чăваш АССР-ĕнчи мĕнпур финанс работникĕсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем! Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин юлташ ертсе пынипе пирĕн халăх Отечественнăй аслă вăрçа çĕнтерӳпе пĕтерчĕ те мирлĕ аталану тапхăрне, ССР Союзĕнчи халăхсен хуçалăхĕпе культурине çĕнĕрен аталантармалли тапхăра пырса кĕчĕ.

Германи фашизмне тата Япони кăрăхурахла империализмне çĕнтернипе хавхаланса эпир Чăваш АССР-ĕнчи мĕнпур финанс работникĕсене хамăрăн Çĕнтерӳ ячĕпе Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту сарса яма чĕнетпĕр.

Хамăр çине эпир çакăн пек обязательствăсем илетпĕр:

1. 1945 çулхи IV-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана Октябрьти социализмлă аслă революци уявĕччен сахалтан та 60 процент тултарма.
2. 1945 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне мĕнпур налог тата ытти тĕрлĕ парăмсене пĕтĕмпех тӳлесе татма.
3. Октябрьти социализмлă аслă революци 28 çул тултарнă тĕле Государствăн Военнăй Тăватăмĕш Заемĕшĕн ялти халăхран пухмалли укçа-тенке пĕтĕмпех пухса çитерме.
4. Ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне финанс планне çакăн чухлĕ тултарма: страховка тӳлевĕсем тăрăх сахалтан та 70 процент, перекет кассисен вклачĕсем тăрăх сахалтан та 60 процент, государство дохочĕсем тăрăх сахалтан та 55 процент, налог тӳлевĕсем тăрăх сахалтан та 60 процент.

Эпир Чăваш АССР-ри мĕнпур финанс работникĕсене хамăрăн аслă Çĕнтерӳ ĕçре татах та çĕнĕрен паттăрла ĕçсем тунипе палăртма, мĕнпур вăй-хăватпа пултарулăха хамăрăн аслă Тăван çĕршывăн вăрçăпа экономикăри вăй-хăватне малалла аталантарса пырас çĕре яма чĕнетпĕр.

Сывă пултăр пирĕн хăватлă Советлă Тăван çĕршыв!

Сывă пултăр Ленинпа Сталинăн большевиксен партийĕ!

Сывă пултăр совет халăхĕн аслă çулпуçĕ Совет Союзĕн Генералиссимусĕ, пирĕн тăван тата юратнă Сталин юлташ!

Çĕрпӳпе Сĕнтĕрвăрри районĕсен финанс органĕсенчи, перекет кассисенчи тата страховка инспекцийĕсенчи работниксен пухăвĕнче йышăннă.

СССР Наука академийĕнче

ТЕХНИКАЛЛА НАУКĂСЕН ОТДЕЛЕНИЙĔН СЕССИЙĔ

Сентябрĕн 27-мĕшĕнче техникăллă наукăсен отделенийĕн транспорт ыйтăвĕсене сӳтсе-явма пухнă сессийĕ уçăлнă. Сессире А. М. Терпигоров академик председатель пулнă.

Каçхи ларура чугун çул транспортне урăхлатасси çинчен В. Н. Образцов академик тунă доклада итленĕ. Докладчик пилĕкçуллăх плана хатĕрленĕ май транспорт умĕнче тăракан задачăсем çинчен тĕплĕн каласа панă. Образцов академик çапла каланă: 1950 çул тĕлне чугун çулпа турттарса çӳрекен грузсен йывăрăшĕ чылай ӳсмелле. Ăна ӳстерес тесен, чугун çулсене урăхлатмалла: çĕнĕ çулсем тумалла, хальхи чугун çулсене урăхлатмалла, нумайĕшне электрификацилемелле.

Планра çĕнĕ йышши вагонсемпе паровозсем тумаллине, поездсен хăвăртлăхне нумай ӳстермеллине палăртса хунă. Докладчик шутланă тăрăх, товарнăй поездсем сехетре 50 километртан кая çӳремелле мар, пассажирски поездсем сехетре 100 километр каймалла.

Поездсен йывăрăшне ӳстересси, вагонсене пушатнă чухне иртекен вăхăта чакарасси, вагонсене 2—2,5 хут хăвăртрах каялла çавăрса килесси питĕ паха задачăсем пулса тăраççĕ.

— Социализмлă транспорта чи çĕнĕ техникăпа пуянлатмалла,—тенĕ Образцов академик.—Совет Союзĕнчи чугун çул çинче радио çыхăнăвĕпе, автоматикăпа, телеуправленипе, люминисцентлă çутăпа тата наукăн чи çĕнĕ çитĕнĕвĕсемпе анлăн усă курмалла.

Каçхи ларура тата СССР Наука академийĕн член-корреспонденчĕ В.Б. Звонков хутăш турттарса çӳрес ĕçе организацилесси çинчен тунă доклада итленĕ.

(ТАСС).

Хăмла пысăк тупăш парать

ОКТЯБРЬСКОЕ. Туппай Ĕсмĕлĕнчи «Красная Чувашия» колхоз кашни çулах хăмла участокĕнчен пысăк тупăш илет. 1943 çулта гектартан 8 центнер, 1944 çулта 11 центнер хăмла туса илнĕ. Ку колхоз тухăçлă хăмла туса илес тĕлĕшпе районра çеç мар, республикăра та паллă вырăн йышăнса тăрать. Кăçал колхоз агротехника мероприятийĕсенче тĕрĕс пурнăçласа пынине пула, кашни гектартан 13 центнер хăмла туса илчĕ.

Иртнĕ çулсенче кунта хăмла ĕçĕпе ĕçлекен уйрăм бригада пулман. Сдельщинăпа ĕçлеменнине пула, хăмлана кая юлса татнă. Сухалас, хăмла тымарĕсене касса лартас тата хăмлана типĕтес ĕçре те çитменлĕхсем пулнă.

Колхоз кăçал иртнĕ çулхи çитменлĕхсене пĕтĕмĕшпех пĕтерчĕ. Кунта хăмла артса тума юр кайсассăнах 32 çынран тăракан бригада организациленĕ. Бригадăна 2 лаша, пĕр вăкăр çирĕплетсе панă. Хăмла вырăнĕ çинче ĕç пуçланачченех план туса, ăна колхозниксен пухăвĕнче çирĕплетнĕ. Унтан вара кашни колхозник шанса панă ĕçшĕн ответлă пулса ĕçе тытăннă. Кăçал мĕн суркуннерепех бригадăра 4 звено ĕçлерĕ.

Çуркунне юр кайсассăнах хăмла плантацине 80 центнер фекали, 20 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата 160 тонна тислĕк кăларнă, 30 центнер кали тăварĕ сапнă. Шыв çурса сиенленĕ вырăнсене юсанă. Ку ĕçре уйрăмăнах хмелевод Тимофей Мотнов тăрăшса ĕçлерĕ. Вăл Мускавра Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче икĕ хутчен пулса опыт тупнăскер, хăмла тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунă. Çавна пула хăмла халиччен тухнинчен нумай тухăçларах пулнă.

Кунта хăмла калчисене вăхăтра каснă. Хăмла плантацине виçĕ хутчен сухаласа çемçетнĕ. Çумкурăксем тухсан вĕсене окучникпе чĕрнĕ, хушша юлнă çумкурăксене çумласа тасатнă. Хăмла калчаланма пуçличчен шпагатсем çакса тухнă.

— Хăмлана юратас пулать, унсăрăн вăл тухăçлă пулмасть,—тет хмелевод Тимофей Мотнов. Вăл кашни кунах хăмла плантацинче хăмла мĕнле çитĕннине астуса асăрхаса пынă. Вак-тĕвек çитменлĕхсем палăрсан, вĕсене юсаса е çĕнетсе пынă, хăмла плантацине çил тăвăл ватасран сыхланă. Хăмла татма тытăнсан кашни колхозник, звенопа звено ăмăртса ĕçленĕ. Ĕç нормине кам мĕнле тултарса пынине Мотнов юлташ кашни кунах тĕрĕслесе тăнă. Агитаторсем хăмла татнă çĕре тухса хаçатсем вуласа панă тата тĕнчери лару-тăру хыпарĕсемпе паллаштарнă. Колхоз председателĕ Алексей Чупраков час-часах хăмла татакансемпе производствăллă канашлусем туса ирттернĕ.

Ĕçе лайăх та пĕлсе йĕркелесе янине пула, хăмла тухăçĕ чылай ӳсрĕ. Халĕ колхоз 85 тонна хăмла типĕтсе государствăна пачĕ. Колхозниксем хăмла тухăçлă пулнишĕн питех те савăнаççĕ. Колхоз кăçал государствăна тырăшăн та хăмла парса пысăк тупăш турĕ. Çапла майпа вара колхозниксене ĕçкунĕ пуçне пĕрер килограмм валеçсе памаллăх тырă перекетлесе юлчĕ. Кунсăр пуçне государство колхоза 30.000 тенкĕ премии пачĕ. Кооператив урлă колхозниксем валли 1400 метр мануфактура, 1100 штук туплашка сиппи. 50 штук сыхнă кĕпеçĕм тата 20 шаль илнĕ. Халĕ вăл пусма таварсене хăмла ĕçĕнче лайăх ĕçленĕ колхозниксене пачĕç.

Н. АНДРЕЕВ.

Йĕтĕнпе кантăр татса пĕтернĕ

Етĕрне районĕнчи колхозсем 92 гектар йĕтĕне тата 303 гектар кантăра татса пĕтернĕ. 80 гектар йĕтĕне сарнă тата пултарма сарнă. 260 гектар çинчи кантăра сапнă. Анчах та районри пĕр колхоз та кантăра шыва хутма тытăнман. Кантăра сапнă хыççăнах шыва хутасси пирки ĕç, çавăнпа та ăна кашни колхозрах халех тума тытăнмалла.

Каспи тинĕсне—йывăç

Тинĕс флочĕн Халăх Комиссариачĕ хушнă тăрăх. Сĕнтĕрвăрри хулине Бакуран виçĕ баржăллă караван çитнĕ. Караванпа пĕрле Бакуран 80 çын вăрман касакансем килнĕ. Вĕсен Каспи тинĕсĕ валли 5.000 кубометр йывăç хатĕрлемелле, ăна хăйсемпе пĕрле тиесе каймалла. Халĕ пĕр баржа çине икĕ пин кубометр йывăç тиесе хатĕрленĕ те ĕнтĕ. Ытти 3000 кубометра баржăсем çине тиенĕ хыççăн, караван Баку хулине каялла тухса каять.

Бакуран килнĕ каравана Сĕнтĕрвăрринчи суловерфь коллективĕ (директорĕ Жилочкин юлташ) кăмăллăн кĕтсе илнĕ.

В. М. МОЛОТОВ ПАТĔНЧЕ ПУЛНĂ ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИ

ЛОНДОН, октябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 3-мĕшĕнче Ют Çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Лондонри Совет посольствинче пресс-конференци туса ирттернĕ. Унта Англи хаçачĕсемпе ытти çĕршыв хаçачĕсен представителĕсем çĕр çын ытла пулнă. Малтан В. М. Молотов сăмах каланă, унтан корреспондентсем панă вумай ыйтусем çине ответленĕ.

В. М. Молотов юлташ çапла каланă: «Пирĕн пресс-конференци пилĕк державăн Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕ хăйĕн ĕçне пĕтернĕ хыççăн пулса иртет. Паллах, ытти министрсем те паян пресс-конференцисем туса ирттерĕççĕ. Ку пресс-конференци кирли чи малтанах çакăнтан палăрса тăрать: Министрсен совечĕн пĕрремĕш сессийĕ пĕтнĕ хыççăн унăн ĕçĕсем çинчен нимĕн те пĕлтермен. Çавăнпа та Советăн ĕçĕсем çинчен мĕнле те пулин пĕлтерÿ памалла. Унтан пресс-конференци тата çакăншăн кирлĕ: вулакансене те кăштах шеллемелле, вĕсене хальхи пек пĕр тĕрлĕ çсç мар, пур енчен те тĕплĕн каласа ăнлантармалла. Пирĕн ыйтăва объективлă, пур енчен те тĕрĕс сутатса парассишĕн тăрăшмалла.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕ Виçĕ правительство Пуçлăхĕсен Берлинри конференцийĕ йышăннă тăрăх пухăнса ĕçлерĕ. Берлинри конференци решенийĕнче Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕ умĕнче мирлĕ договорсем тăвас тĕлĕшпе мĕнле задачăсем тăни çинчен мĕн каланине те аса илтерни ытлашши пулас çук. Çав решенин текстне халĕ пурте астумаççĕ пулмалла. Виçĕ державăн Берлинри конференцин решенийĕнче Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен советне тăвасси çинчен çапла каланă (3-мĕш пункт):

«Советăн халех тумалли паха задачисенчен пĕри вăл Итали, Румыни, Болгари, Венгри тата Финлянди пирки договорсем туса хатĕрлесси пулать...»

Çав пунктрах малалла çапла каланă:

«Çак задачăсенчен кашнине татса паракан Совета, членсем пулса, пĕр сăмахсăрах парăнни çинчен калакан условие алă пуснă государствăсен—çак задача пырса тивекен тăшманла государствăна хушса çырнă условисене алă пуснă государствăсен представителĕсем кĕрĕççĕ».

Министрсен советне тăвасси çинчен йышăннă решение Америка правительстви сĕннипе тунине çеç асăрхаттарса хăварма тивет манăн.

Министрсен совечĕ мирлĕ договорсем тума хатĕрлес тĕлĕшпе халех тумалли задачăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе мĕн те пулин турĕ-ши? Паллах, турĕ. Министрсен совечĕн 33 ларăвĕ ахаль иртмерĕ. Çав ларусенче питĕ пикенсе ĕçленĕ. Çав ларусенче пилĕк министр хăшпĕр ыйтусем тĕлĕшпе калаçса килĕшнĕ. Çавăн пек ыйтусен шутне, сăмахран, Германирен вăрçă тăкакĕсене шыраса илес тĕлĕшпе ĕçлекен Союзниксен комиссийĕн ĕçне хăвартлатасси, Австри тĕлĕшпе тăракан ыйтăва татса парасси тата ытти хăшпĕр ыйтусем те кĕреççĕ. Эпир Японире Союзниксен Контроль Советне тăвас ыйтăва сÿтсе-явмарăмăр. Анчах та ку ыйтăва сÿтсе-явманнишĕн Совет делегацийĕ айăплă мар. Кунсăр пуçне, Великобританин, Совет Союзĕн, США-н тата Францин министрĕсем Италипе тумалли мирлĕ договорăн хăшпĕр ыйтăвĕсем тĕлĕшпе калаçса килĕшнĕ. Çавăн пекех Великобританин, Совет Союзĕн тата США-н министрĕсем Румынипе, Болгарипе тата Венгрипе тумалли мирлĕ договорăн хăшпĕр ыйтăвĕсем тĕлĕшпе те пĕр-пĕринпе калаçса килĕшнĕ. Великобританипе Совет Союзĕн министрĕсем Финляндипе тумалли мирлĕ договор çинчен çăмăллăнах калаçса татăлчĕç.

Тата çапла ыйту тухса тăрать: министрсем хушшинче пĕр-пĕринпе килĕшменнисем пулнă-и? Çапла, пулнă. Темĕнле хаçатра эпĕ Министрсен совечĕн ĕçне Франципе хутшăнтарас ыйту пирки килĕшменлĕхсем пулни çинчен вуласаттăм. Анчах та Министрсен советĕнче ку ыйту тĕлĕшпе мĕншĕн килĕшменлĕхсем пулма пултарассĕ-ха? Ку ыйту тĕлĕшпе Берлинри конференцин решенийĕнче татăклăнах каласа хăварнă вĕт. Унта Италипе тумалли мирлĕ договорăн ыйтăвĕсене сÿтсе-явнă чухне Франци хутшăнать, анчах урăх ыйтусене сÿтсе-явнă чухне хутшăнмасть, тесе каланă. Министрсен совечĕ хăйĕн ĕçне пуçличчен малтан Франци правительствинчен Берлинри конференцин решенийĕ тĕлĕшпе çыру илнĕ, анчах та вăл çырура Франци Берлинри конференцин решенине улăштарсан тин хăй Министрсен совечĕн ĕçне хутшăнма пултарни çинчен нимĕн те каламан. Лондона пырăччен Франци представителĕ Министрсен советĕнче мĕнле ыйтăва сÿтсе-явнă çĕре хутшăнассине тата мĕнле ыйтăва сÿтсе-явнă çĕре хутшăнас маррине пĕлнĕ. Ку ыйту тĕлĕшпе Берлинри килĕшĕве алă пусакансем хушшинче те килĕшменлĕх пулман.

Тен, Министрсен совечĕн ĕçне Китая хутшăнтарас пирки килĕшменлĕхсем пулнă пуль? Китай министрĕ ку ыйту тĕлĕшпе: манăн килĕшменлĕхсем пур, тесе каланă çынна курасчĕ манăн. Китай министрĕ ун пек каламаннине эпĕ лайăх пĕлсе тăратăп.

Уйрăм хаçатсенче сентябрĕн 11-мĕшĕнче йышăннă темĕнле «решени» çинчен çыркаларĕç. Анчах та ун пек «решени» пур пулсан, манăн ăна вуласа пăхасчĕ. Министрсен совечĕ нимĕнле «решени» те йышăнман пулсан, çав «решение» пĕр министр та алă пусман пулсан, мĕнле «решени» çинчен калаçу пырать-ха? Çакă ĕнтĕ Министрсен советĕнче килĕшменлĕхсем пуррине пытарса хăварма тăрăшни пулмасть-и? Çук, пулмасть. Министрсен советĕнчи килĕшменлĕхсем çинчен каласан, çакна кăтартса хăвармалла: чăнах та, Виçĕ державăн Берлинри конференцийĕнче тунă килĕшĕве пурнăçа кĕртес ыйту тĕлĕшпе килĕшменлĕхсем пулнă. Августăн 1-мĕшĕнче Берлинра Виçĕ державăн правительство Пуçлăхĕсем килĕшÿ тунине никам та тунмасть. Анчах кунта, Лондонра çав Берлинри конференцин решенине пурнăçа кĕртес, е кĕртес мар ыйту тĕлĕшпе килĕшменлĕхсем пуçланса кайрĕç. Ку ыйту тĕлĕшпе нумайччен калаçнă. Халĕ кунта çакăн пек сăмахсем илтме пулать: çав килĕшÿн пĕр пункчĕ килĕшет, тепĕр пункчĕ питех килĕшмест, ку пункт лайăх, вăл «анлă», тепĕр пункчĕ—начар, ытлашши «хĕсĕк», теççĕ. Çакăн пек сÿтсе-явнисем ĕнтĕ килĕшÿн никĕсне хавшатмаççĕ-и? Эпир, совет çыннисем, çапла шутлатпăр, килĕшĕве алă пусрăн пулсан, вара эсĕ ăна пурнăçа кĕртме сăмах патăн. Килĕшĕвĕн паян килĕшекен пайне çеç пурнăçа кĕртни вăл—пачах та юрăхсăр япала, ăна пĕтĕмпех пурнăçа кĕртсе пымалла. Тепĕр енчен, Виçĕ правительствăн пуçлăхĕсем йышăннă килĕшĕве министрсем улăштарма пултараймаççĕ те.

Тата пире çапла калаpĕç: Румынипе, Болгарипе, Венгрипе тата Финляндипе тумалли мирлĕ договорсене хатĕрлес ĕçе Китайпа Францин те хутшăнмалла, терĕç. Анчах та ку ыйту тĕлĕшпе Берлинри конференци урăхла йышăннă. Кунта та эпир Берлинри конференцин решенине пăсиине хирĕç пултăмăр. Китай та, Франци те çав çĕршывсемпе перемири условийĕсене тăвас ĕçе хутшăнман тата çав условисене алă пусман çеç те мар, вĕсем çав çĕршывсене хирĕç вăрçман та. Эпир фактсемпе çирĕплетсе каланине хирĕç пире çапла ответ пачĕç: Виçĕ державăн Берлинри конференцийĕнче тунă килĕшĕве пăсас пирки эпир каланипе килĕшĕр, е эпир калаçса татăлнă решенисене те алă пусмастпăр, терĕç. Анчах çапах та эпир Берлинри решенисене тĕрĕс тытса пытăмăр, ăна тĕрлĕ майпа пăсассинчен хÿтĕлерĕмĕр. Совет Союзĕ хăйĕн сăмахне тÿрĕ тытса пынине пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ. Хăй çине илнĕ обязательствăсене Совет Союзĕ тăташах тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынине нумаях пулмасть союзниксем те пысăк хак паратчĕç. Совет Союзĕ те ĕнтĕ хăйĕн союзникĕсенчен çавнах кĕтет.

Берлинри решенисене пăсакан пур тĕрлĕ сĕнÿсене те, вĕсене кирек епле сăлтавсемпе çирĕплетсе каланă пулсан та, Совет делегацийĕ хыта хирĕçленине эпĕ татах тепĕр хут калатăп. Анчах çапах та Совет делегацийĕ Министрсен совечĕн пĕрремĕш сессийĕ мĕнле те пулин ăнăçу туса пĕттĕр тесе тăрăшрĕ, мĕншĕн тесен çав ăнăçу вăл союзниксен интересĕсемшĕн пулмалла. Çавăнпа та ĕнтĕ Совет делегацийĕ ĕнер Министрсен советне çакăн пек сĕнÿ пачĕ:

«Пĕрремĕшĕ. Совет делегацийĕ Министрсен советĕнче килĕшсе татăлнă çак решенисен протоколĕсене октябрĕн 2-мĕшĕнче алă пусма сĕнет:

1. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен, Великобританин, Совет Союзĕн, Францин тата Китайăн министрĕсем Министрсен советĕнче пилĕкĕш пĕрле йышăннă решенисен протоколне алă пусмалла.

2. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен, Великобританин, Совет Союзĕн тата Францин министрĕсем Министрсен советĕнче Италипе мирлĕ договор тăвасси çинчен йышăннă решенисен протоколне, Берлинра йышăннă тăрăх тунăскере, алă пусмалла.

3. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен, Великобританин тата Совет Союзĕн министрĕсем Министрсен советĕнче Румынипе, Болгарипе тата Венгрипе тумалли мирлĕ договор çинчен йышăннă решенисен протоколĕсене, Берлинра йышăннă тăрăх тунăскерсене, алă пусмалла.

4. Великобританипе Совет Союзĕн министрĕсем Финляндипе тумалли мирлĕ договор çинчен йышăннă решенисен протоколне, Берлинра йышăннă тăрăх тунăскере, алă пусмалла.

Иккĕмĕшĕ. Министрсен советĕнче октябрĕн 2-мĕшĕччен йышăнмасăр юлнă ыйтусене Министрсен совечĕн октябрĕн 3-мĕшĕнчи ларăвĕнче пăхса тухмалла (совет делегацийĕ октябрĕн 3-мĕш кунне Министрсен совечĕн ĕçĕн юлашки кунĕ тума сĕннĕ)».

Çапла ĕнтĕ, Совет делегачĕсем министрсем хушшинче пĕтĕмпех калаçса килĕшнĕ нумай протоколсене алă пусма сĕннĕ. Çакă ĕнтĕ Министрсен совечĕн ĕçне ĕнерех малалла янă пулĕччĕ. Ман шутăмпа, çав протоколсене алă пусни килĕшмен ыйтусене пăхса тухмалли юлашки кун ĕçлеме лайăхрах условисем туса панă пулĕччĕ.

Мускавра нумайĕшĕ çапла шутлаççĕ: кирлĕ чухне Лондонра компромиссем тупма пĕлеççĕ. Анчах та Министрсен совечĕ Совет делегацийĕн сĕнĕвне йышăнмарĕ, килĕшмен ыйтусем тĕлĕшпе юрăхлă çулсем шырама тăрăшмарĕ. Çавна пула ĕнтĕ нимĕнле протокола та алă пусман. Кирек епле пулсан та, çакă ĕнтĕ факт пулса тăрать.

Юлашкинчен, çак килсе тухнă ларутăру çине Совет делегацийĕ мĕнле пăхни çинчен каласа парас килет манăн. Совет Союзĕ юлашки тĕнче вăрçинчи çĕнтерÿ туса тухрĕ, тĕнчери государствăсем хушшинче вăл халĕ тивĕçлĕ вырăн йышăнса тăрать. Çакă ĕнтĕ Германие хирĕç пынă вăрçăра, юлашки вăхăтра—Японие хирĕç пынă вăрçăра Хĕрлĕ Çарпа мĕнпур совет халăхĕ хăйĕн вăйне шеллемесĕр кĕрешнин, ĕçленин результачĕ пулса тăрать. Çавăн пекех тата çакă вăл иртнĕ çулсенче Совет Союзĕпе унăн хĕвеланăçĕнчи союзникĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ăнăçлă ĕçленин результачĕ пулса тăрать. Совет делегацийĕ малашнехи çине çирĕппĕн пăхать. Эпир хĕвеланăçĕнче те, хĕвелтухăçĕнче те хамăрăн союзниксемпе килĕштерсе ĕçлессине çирĕплетсе хамăрăн халăха усă парассине тата пĕтĕм тĕнчери мире çирĕплетессине шанса тăратпăр».

Малалла В. М. Молотов юлташ корреспондентсем панă çакăн пек ыйтусене ответленĕ:

ЫЙТУ: Сентябрĕн 11-мĕшĕнче решени йышăнман-им вара?

ОТВЕТ: Эсир ун пек решение тупатăр пулсан, ăна мана кăтартăр тата ăна кам-кам алă пуснине каласа парăр.

ЫЙТУ: Ларусем çинчен кунсерен çырса пынисенче, уйрăмăн илсен, сентябрĕн 11-мĕшĕнчи лару çинчен çырнинче çапла каланă: Министрсен совечĕн пилĕк члене те ларусене çÿреме пултарассĕ, анчах та мирлĕ договор ыйтăвĕсене сÿтсе-явнă чухне пурте сасăлама пултараймассĕ, тенĕ. Çапла калани тĕрĕс-и?

ОТВЕТ: Çакăн çинчен эпĕ çапла пĕлтерме пултаратăп: ку ыйту тĕлĕшпе Министрсен совечĕн пĕрремĕш сессийĕ вăхăтĕнче Трумэн президент, премьер-министр Эттли тата Совет правительствин пуçлăхĕ Сталин пĕр-пĕрин патне çыру янă. Совет правительстви хăйĕн ответĕнче Берлинри конференцин решенине çирĕп пăхăнса тăма кирлине палăртнă. Берлинри конференцин решенийĕнче Италипе тумалли мирлĕ договора хатĕрлес тĕлĕшпе, Румынипе, Болгарипе тата Венгрипе тумалли мирлĕ договорсене хатĕрлес тĕлĕшпе, Финляндипе тумалли мирлĕ договора хатĕрлес тĕлĕшпе мĕнле государствăсем мĕнле йĕркепе ответ тытмаллине лайăх кăтартса панă. Ку ыйту тĕлĕшпе союзниксемшĕн нимĕнле çырусем те, вĕсем союзниксем Берлинра тунă килĕшĕве хирĕçлессĕ пулсан, вăй пулса тăма пултараймассĕ.

ЫЙТУ: Берлинри конференцин решенийĕнче мирлĕ договор тăвас ĕçе Министрсен совечĕн ытти членĕсене хутшăнтарасси çинчен мĕн калани пирки эсир хăвăрăн шухăшăра каласа пама пултараймастăр-и?

ОТВЕТ: Берлинри конференцин решенийĕнче çапла каланă: Министрсен совечĕн ытти членĕсене Советăн мирлĕ договорĕсем тĕлĕшпе тăвакан ĕçне çав çĕршывсене пырса тивекен ыйтусене пăхса тухнă чухне çеç хутшăнтармалла. Çакăн пек ыйтусене Советăн перемири условийĕсене алă пуснă çĕршывсем хушшинче килĕштерсе татса памалла.

ЫЙТУ: Франципе Китай Хăрушсăрлăх Совечĕн яланхи членĕсем пулса тăраççĕ. Мирлĕ договорсене хатĕрлес тĕлĕшпе Министрсен советĕнче вĕсене яланах хутшăнтарса ĕçлеттерсен лайăхрах пулĕ тесе шутламастăр-и эсир?

ОТВЕТ: Эпĕ ку ыйту пирки каласа патăм. Халĕ çакна çеç калама пултаратăп: Хăрушсăрлăх Совечĕн членĕсем пулса тăракан Франципе Китая Совет правительстви питĕ хисеплет. Унсăр пуçне, Совет Союзĕ Франципе те, Китайпа та туслăхпа союз çинчен нумай вăхăтлăха договор тунă.

ЫЙТУ: Манăн çакна пĕлес килет: Министрсен совечĕн протоколĕсене алă пусманни Министрсен совечĕн членĕсем çак конференцире тунă решенисене йышăннипе йышăнманнине пĕлтерет-и?

ОТВЕТ: Ун çинчен пур министрсен те шухăшласа пăхмалла.

ЫЙТУ: Хăшпĕр державăсем Франципе Китая пур ыйтусене сÿтсе-явнă чухне те хутшăнтарма сĕннин мĕнле сăлтавсем пур? Çак сĕнÿ Берлинри конференцин решенине хирĕçлет вĕт?

ОТВЕТ: Ун çинчен çав Державăсен представителĕсенчен ыйтмалла.

ЫЙТУ: Пĕтĕм тĕнчери мирлĕ конференцие пухасси çине Совет делегацийĕ мĕнле пăхнине эсир каласа пама пултараймастăр-и? Совет делегацийĕ çав сĕнĕве хирĕçлемест-и, е ун пирки Мускавра нимĕнле решени те йышăнман?

ОТВЕТ: Эпир, паллах, мирлĕ договорсене сÿтсе-явма пĕтĕм тĕнчери конференцие пухма кирлине пĕлетпĕр. Анчах ку ыйту тĕлĕшпе те эпир Берлинри килĕшĕве пăхăнса пыратпăр, ăна тĕрĕс тесе шутлатпăр.

ЫЙТУ: Татах тепĕр ыйту. Перемири условийĕсене алă пуснă çĕршывсем пĕр-пĕринпе тунă килĕшÿсене конференцире ытти çĕршывсене те алă пусма хушма пултараççĕ. Вара çав çĕршывсемшĕн те çав килĕшÿ вырăнлă пулать-и?

ОТВЕТ: Паллах, вырăнлă пулмасть. Ун пек тăвас пулсан, конференци пухма та кирлĕ мар. Конференцие пăхса тухма тăратнă проектсене сÿтсе-явса лайăхлатма пухăççĕ. Мирлĕ договорсем тăвас тĕлĕшпе пĕтĕмпех хатĕрлесе ситсен, çакăн пек конференцисем кирлĕ пулаççĕ.

Японири контроль совечĕ çинчен

ЛОНДОН, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Лондонри посольстви сентябрĕн 29-мĕшĕнче пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. Пĕлтерÿре çапла каланă: Америка правительстви Инçетри Хĕвелтухăçĕнче консультаци комиссийĕ тăвасси çинчен сĕннипе Англи правительстви килĕшет. Çавăн пекех консультаци комиссине тăвас тĕлĕшпе Совет Союзĕпе Китай та килĕшессĕ, тенĕ пĕлтерÿре.

Çавăнпа пĕр вăхăтрах Бирнс господин В. М. Молотова çапла пĕлтернĕ: эпĕ Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи консультаци комиссине тăвас тĕлĕшпе Бевин господинпа калаçса татăлтăм. Çавăн пек комисси тăвасси çинчен Совет Союзĕпе Китай та килĕшнĕччĕ.

Çакна хирĕç В. М. Молотов октябрĕн 1-мĕшĕнче Бирнс господин патне çыру янă. Çырура çапла каланă: Японире союзниксен контроль механизмне тăвас ыйтăва Совет правительстви питĕ пысăк вырăна хурать. В. М. Молотов çырăвĕнче малалла çапла каланă:

«Хальхи вăхăтра манăн чи малтанах çакна калас килет: Япони тĕлĕшĕпе консультаци комиссине тăвассипе Совет правительстви килĕшнĕ тени хальхи лару-тăрăва тĕрĕсех сăнласа параймасть. Консультаци комиссине тăвас ĕç вăраха юлнă пирки, Японири лару-тăру улшăннă пирки Совет правительстви сентябрĕн 24-мĕшĕнче Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен советне меморандум панăччĕ. Унта Япони тĕлĕшĕпе контроль совечĕ тума кирлине, вăл совет Токио хулинче пулма кирлине, унта Пĕрлешÿллĕ Штатсен, Великобританин, Совет Союзĕн тата Китайăн представителĕсене кĕртмеллине, Пĕрлешÿллĕ Штатсен представительне председатель тума кирлине кăтартса панăччĕ.

Совет правительстви çапла шутлать: вăрçа пынă вăхăтра тата Японин хĕçпăшаллă вăйĕсене хĕçпăшалсăрлантарса пĕтермен вăхăтра Японие контроль туса тăрас мĕнпур ĕçсене союзниксен главнокомандующи аллинче пĕтĕçтерсе тăни усăллăрах пулнă. Анчах та вăрçă вăхăчĕ иртсе кайсан, союзниксем умĕнче çĕнĕ задачăсем—чи малтанах, политика, экономика тата финанс задачисем тухса тăчĕç. Çав задачăсене татса памашкăн союзниксен çирĕп органĕ кирлĕ. Çав органа кĕрекен тăватă державăн представителĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлемелле тата хăйсен ĕçĕшĕн пĕрле ответ тытмалла. Совет правительстви сентябрĕн 24-мĕшĕнче панă хăйĕн меморандумĕнче каланă шухăшсене çирĕп тытса тăрать».

Юлашкинчен В. М. Молотов юлташ контроль совечĕпе пĕрлех союзниксен консультаци комиссийĕ те усăллă пулма пултарни çинчен пĕлтернĕ. Америка сĕнĕвĕ тăрăх, çав комиссие союзлă тăватă державăн представителĕ çеç мар, тата Японие хирĕç кĕрешнĕ ытти çĕршывсен представителĕсем те кĕмелле. «Анчах та,—тенĕ малалла В. М. Молотов çырăвĕнче, — Совет правительстви çапла шутлать: союзниксен çакăн пек консультаци комиссине тăвиччен малтан союзлă тăватă правительствăн Японире контроль совечĕ тăвасси çинчен калаçса татăлмалла, мĕншĕн тесен ку ыйтăва вăраха хăварни чылай пысăк йывăрлăхсем кÿме пултарать».

ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 2-мĕшĕнче Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕ. икĕ лару туса ирттернĕ. Ирхи ларура В. М. Молотов председатель пулнă, каçхи ларура Ван Ши-цзе господин председатель пулса ертсе пынă. Каçхи ларура Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн ку сессие ĕçлеме пăрахасси çинчен йышăннă.

ПĔРЛЕШНĔ НАЦИСЕН УСТАВНЕ ÇИРЕПЛЕТНИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ДОКУМЕНТСЕНЕ ПАНИ

ВАШИНГТОН, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Государство департаменчĕ çапла пĕлтернĕ: сентябрĕн 28-мĕшĕнче Китайăн Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи посолĕ Вей Дао-мин тата Турцин Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи посолĕ Байдур Пĕрлешнĕ нацисен уставне тата пĕтĕм тĕнчери судăн статутне çирĕплетни çинчен калакан документсене панă.

Çапла ĕнтĕ, Пĕрлешнĕ нацисен уставне йышăнни çинчен калакан документсене хальхи вăхăтра вунă государство панă. Чи малтан Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем панă, унтан Франци, Доминикан республики, Никарагуа, Çĕнĕ Зеланди, Бразили, Аргентина, Эквадор, Китай тата Турци.

НИМĔÇ СПЕЦИАЛИСЧĔСЕНЕ АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШÿЛЛĔ ШТАТСЕНЕ ЯНИ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар министерстви çапла пĕлтернĕ: Англи влаçĕсем Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене нимĕçсен паллă ученăйĕсемпе техникĕсене яраççĕ. Çаксем çарпа тинĕс-çар ĕçĕнчи тĕпчевсенче пулăшса пымалла. Кама янисен хушамачĕсене пĕлтермеççĕ. Вĕсене çар çыннисем асăрхаса сыхласа тăмалла. Çар министерстви пĕлтернĕ тăрăх, çакă вăл Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене «нимĕçсем шухăшласа кăларнă е тупнă питех те кирлĕ çĕнĕ япаласемпе усă курма май памалла, çакă США хăрушсăрлăхĕшĕн питĕ кирлĕ».

МАКАРТУР ГЕНЕРАЛ ЭТТЛИ ПРЕДСТАВИТЕЛĔПЕ КАЛАÇНĂ

ДЕЛИ, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Дели хулинчи радио çапла пĕлтерет: Макартур генерал Эттли премьер-министрăн Токио хулине пынă представительне Чарльз Гарднера йышăннă. Гарднер канашлу пĕтнĕ хыççăнах Токио хулинчен кайнă.

ЯПОНЕЦСЕН 21 БАНКНЕ ПĔТЕРСЕ ЛАРТМА ЙЫШĂННĂ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Сан-Франциско хулинчи радио пĕлтернĕ тăрăх, Макартур генерал 6-мĕшпе 8-мĕш çарсене приказ панă. Çав приказра японецсен çар промышленноçне укçа парса тăнă Япони банкĕсене хупса лартма тата вĕсен çурчĕсене йышăнма хушнă. Приказ тăрăх 21 банка хупмалла.

Банксенче ĕçленĕ служащисене кăларса ямалла, банксен ĕçĕсене пурне те союзниксен влаçĕсене памалла. Японин финанс министрне çакна пурнăçа кĕртме тивĕçлĕ кăтартусем панă.

ЧЕРНОГОРИ СТОЛИЦИНЧЕ СУЙЛАВ УМĔН ПУЛСА ИРТНĔ ПУХУ

БЕЛГРАД, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Белградри радио çапла пĕлтерет: Черногори столицинче суйлавсем умĕнхи пуху пулса иртнĕ. Пухура учредительнăй пухăва суйлама Халăх фронтĕнчен Югослави премьер-министрне Тито маршала кандидата тăратнă.

ЮГОСЛАВИ МАРШАЛНЕ ТИТОНА «ÇĔНТЕРÿ» ОРДЕНĔ ПАНИ

БЕЛГРАД, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ хушнипе Совет Союзĕн Югославири посолĕ Садчиков юлташ Югослави Маршалне Иосип Броз Титона «Çĕнтерÿ» орденĕ панă. Орден панă чухне Садчиков юлташпа Тито маршал пĕрне-пĕри саламлă кĕске сăмахсем каланă. Орден панă чаплă йĕрке иртнĕ хыççăн апатлану туса ирттернĕ. Апатлану туслăн иртнĕ.

«ИСПАНИ РЕСПУБЛИКИН ТУСĔСЕМ» ЯТЛА ОБЩЕСТВО ТРУМЭН ПАТНЕ ЯНĂ ÇЫРУ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). «Испани республикин тусĕсем» ятлă общество Трумэн патне çыру янă. Çырура çапла каланă: Франкона хирĕç нимĕн те тумасан, граждан вăрçи пуçланса кайма пултарать. Пĕрлешÿллĕ Штатсен Испани республиканецĕсене тата пĕтĕм тĕнчене ĕнентерсех çапла каламалла: Пĕрлешÿллĕ Штатсем Испанире демократиллĕ правительство тунине ырлаççĕ, демократиллĕ мар ниепле правительствăна та США йышăнмасть. Послание США-на Франко правительствипе дипломатиллĕ çыхăну тытма пăрахма ыйтнă. Пĕрлешÿллĕ Штатсем Франкон фашистла правительствине чăтса пурăнни Сан-Францискăри конференцин решенийĕсене хирĕçлет, тенĕ çырура.

Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумĕ 50 çул тултарать

Аллă çул каярах, 1895 çулхи октябрь уйăхĕнче, Сĕнтĕрвăрринче вăрман кондукторĕсене е лесничи помощникĕсене вĕрентсе хатĕрлеме вăрман ĕçĕн кĕçĕн шкулне уçнă.

Октябрьти Социализмлă Аслă революци пуличчен Сĕнтĕрвăрринчи вăрман шкулĕ пĕчĕк шкул кăна шутланнă. Унăн вĕренÿ никĕсĕ япăх, вĕренÿ программи ансăр пулнă. Унăн мĕн пурĕ те икĕ класс тата 20 ача валли общежити çеç пулнă.

Шкулта икĕ çул хушши вĕрентнĕ. Паллах ĕнтĕ, çав шкула вĕренме кĕрес текенсем те пурте кĕме пултарайман, мĕншĕн тесен патша Российинче вĕренÿ ĕçĕ пусмăрлакан классен — капиталистсемпе помещиксен аллинче пулнă. Вăрман шкулĕнче пурĕ те 20—25 çын кăна вĕреннĕ, урăхла каласан, кашни класра 10—12 ача пулнă. Шкул уçăлнă çул вĕренме 8 ача çеç илнĕ пулнă.

Шкулăн çулталăкри бюджечĕ 5.000 тенкĕ чухлĕ кăна шутланнă. Вăл укçапа пĕр пин тенке яхăн тĕрлĕ оборудованипе вĕренÿ пособийĕсем туяннă çĕре тăкакланă. Шкулăн библиотеки те чухăн пулнă, библиотекăри кĕнекесен хисепĕ пĕр пинрен те кăтăкрах шутланнă.

Патша Российĕнче 22 çул ĕçленĕ хушăра шкултан пĕтĕмпе те 197 çын кăна вĕренсе тухнă. Вĕренекенсем хушшинче пĕр чăваш та, пĕр хĕрача та пулман.

Октябрьти Социализмлă Аслă революци хыççăн, вăрман шкулĕн пурнăçĕ анлă çул çине тухса, вăйлăн аталанма пуçлать. 1921 çулта çав шкултан техник-лесоводсем хатĕрлекен вăрман техникумĕ туса хунă. Сталинла пилĕкçуллăхсем хушшинче техникум темиçе тĕрлĕ специалистсем хатĕрленĕ. Техникумра ун чухне вăрман хуçалăхĕ, вăрман хатĕрлес, вăрман транспорчĕ, йывăç каскалас ĕçсене вĕрентекен отделенисем ĕçленĕ.

1935 çулта Сĕнтĕрвăрринчи техникума Чикмери техникумпа пĕрлештерсе, 1941 çулта йывăç каскалас ĕçе вĕрентекен техникумпа пĕрлештерсе аслăлатнă.

Хальхи вăхăтра техникум çĕршыври вăрман ĕçне вĕрентекен вăтам шкулĕсен шутĕнче чи пысăк вĕренÿ заведенийĕсенчен пĕри шутланать.

Техникумăн 54 аудиторипе кабинет пур. Техникум сумĕнче механика тата столяр мастерскойĕсем, икĕ электростанци, гараж, машинăсен залĕ, студентсем валли тăватă общежити, столовăй тата пособийăй хуçалăх пур.

Техникум кабинечĕсенчи вĕренÿ оборудованийĕ 200.000 тенкĕ ытла тăрать. Пурнинчен ытла физика, хими, геодези кабинечĕсем, вăрман тартса тăвас тата вăрман хатĕрлевне механизацилес тĕлĕшпе ĕçлекен кабинетсем пуян. Техникум библиотекинче 70.000 тома яхăн кĕнеке шутланать.

Техникумра 28 инженер-преподаватель ĕçлет, вĕсенчен нумайĕшĕ техникумра вуншар çул ытла ĕçлеççĕ. Сăмахран, П. Ф. Софьин, С. К. Кириллов, А. К. Удорин, Ф. В. Липенский, Н. А. Константинов юлташсем 15-шер çул ĕçлеççĕ.

50 çул хушшинче техникум вăрман хуçалăхĕн 1812 специалистне вĕрентсе кăларнă, вĕсенчен чи пысăк пайĕ, 1527 çын, 1917 çул хыççăн вĕренсе тухнă. Вăл шута Древтехникумран вĕренсе тухнисем кĕмеççĕ. Сĕнтĕрвăрри техникумĕнче вĕренсе тухнă специалистсем çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче ĕçлеççĕ. 1897 çулта пĕрремĕш выпускра вĕренсе тухнисенчен ку таринччен вăрман ĕçĕнче ĕçлекенсем те пур. Сăмахран, М. Ф. Коротков, Мари АССР-чи Волжски лесхозра ĕçлекенскер тата М. П. Зиновьев, Мускав облаçĕнчи Пушкински лесхозра ĕçлекенскер: техникумран вĕренсе тухнă юлташсем, сăмахран, В. Р. Шолин, И. П. Шипунов т. ыт. те лайăх ĕçленĕшĕн правительство наградисене илме тивĕçлĕ пулнă.

Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче техникум коллективĕ, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, хăйĕн пĕтĕм ĕçне тăшмана аркатса тăкас задачăпа çыхăнтарчĕ. Вăрçă хушнă пек ĕçлесе пычĕ.

Вăрçă çулĕсенче техникумран 784 специалист вĕренсе тухнă тата тĕрлĕ курссем урлă 140 çын вĕрентсе кăларнă.

Техникум коллективĕ хуçалăхпа политикăллă кампанисене активлăн хутшăнса ĕçлет. Техникум мастерскойĕсем Хĕрлĕ Çар валли спецзаказсем пурнăçласа пынă. Преподавательсемпе студентсенчен çĕр çын ытла, алла хĕçпăшал тытса, Тăван çĕршыва хÿтĕлеме Хĕрлĕ Çар ретне тăнă. Вĕсенчен хăшпĕрисене (Г. Абакумова, Г. Илясунова, М. Максимова т. ыт. те) орденсемпе тата медальсемпе наградăланă.

Паттăр Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене тата Япони империалисчĕсене аркатса тăкни техникум коллективне ĕçре вĕренÿре çĕнĕ ситĕнÿсем тума хавхалантарчĕ. Студентсем вĕренÿре ĕлкĕрсе пырасси кăçалхи çул 1942—43 вĕренÿ çулĕпе танлаштарсан, 29 процент, 1943—44 вĕренÿ çулĕпе танлаштарсан, 9.9 процент ÿснĕ. Вĕренÿ енчен халĕ М. Филиппов, Отечественнăй вăрçă инвалидĕ Ю Березин, В. Рыбкин студент-отличниксем уйрăмах палăрса тăраççĕ.

Техникумра парти, комсомол тата профсоюз организацийĕсем ÿссе çирĕпленнĕ. Коммунистсемпе комсомолецсем чылай ĕçсене пуçарса пыраççĕ. Сăмахран, комсомолецсем çар çыннисемпе вĕсен семйисем валли ăшă япаласем пухас, техникум тавралăхне тасатса йĕркелес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçленĕ. Техникумра физкультура ĕçĕ чылай сарăлнă.

Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумĕ 50 çул хушшинче тунă ситĕнÿсем аслă Сталин юлташ ертсе пыракан партипе правительство халăха çутта кăларассишĕн, халăх хуçалăхĕ валли тивĕçлĕ кадрсем хатĕрлессишĕн мĕн тери тăрăшнине уççăн кăтартса параççĕ.

Революциччен пĕчĕк вăрман шкулĕ кăна пулнă Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумĕ хальхи вăхăтра социализмлă Тăван çĕршыв валли вăрман хуçалăхĕн специалисчĕсене хатĕрлекен пысăк вĕренÿ заведенийĕ пулса тăчĕ.

50 çул хушшинче техникум вăрман хуçалăхне сахал мар пулăшу пачĕ. Анчах çакă вăл техникум ĕçĕнче ситменлĕхсем çуккине пĕлтермест-ха. Ситменлĕхсем пур. Сăмахран, специалистсен пахалăхĕ çителĕксĕрри, производствăпа таччăн çыхăнманни. Кăçал производствăпа çыхăнас тĕлĕшпе малтанхи утăма тунă. 40 студент Эстони ССР-не практикăна кайнă. Ĕçри ситменлĕхсене тимлĕн тăрăшса ĕçлесе, пуринчен малтан преподавательсен коллективĕ тăрăшса ĕçлесе пĕтерсе пымалла.

Кăçалхи çул пирвайхи хут вĕренме илекенсене конкурс тăрăх илнĕ. 150 вырăна 400 ача ытла заявлени панă. Çакна пула суйласа илме лайăх майсем пулнă.

Пирĕн аслă çĕршыв мирлĕ аталану тапхăрне кĕни вĕренÿ пахалăхне тата çÿллĕрех пусăма хăпартма, вăрман хуçалăхĕпе вăрман промышленноçĕ валли лайăх специалистсем хатĕрлесе пама хушать. Техникум коллективĕ, Тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçне çирĕппĕн асра тытса, çĕнĕ ситĕнÿсем тăвассишĕн тăрăшса ĕçлĕ.

И. САЛАМБЕК.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

Чăваш АССР-ĕн Госстрах Управленине çакан пек работниксем кирлĕ: ревизорсем, старши инспекторсем, инспекторсем, техник-строитель, секретарь-машинистка тата статистик.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 10, Управление Госстраха Чуваш АССР.

3—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн—2-89, секретариатăн—4-25, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн — 3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00645 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. 6. 53 42 п. л. Тираж 16.000 экз.